**Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!**

# ТУСЛĂХ

**НĂРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ**
**ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА**

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N5 (4574) | *1998 çулхи январь (кăрлач) уйăхĕн 16-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

## Пĕр предприятирен килнĕ хыпарсем

### Шыв кĕртес текенсем нумай

"Мелиорация" ПМК уçă типлă акционер обществи иртнĕ çул 8 километр шыв пăрăхĕ хывнă. Вĕсенчен 5 километрне хулара, ыттине "Сахăр завочĕ" акционер обществин заказĕпе унăн хушма хуçалăхĕнче хывнă.

### Канализаци линине тунă

Мелиораторсем çаплах канализаци линийĕсем тăваççĕ. Пĕлтĕр кăна нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин заказĕпе Мир тата Дружба урамĕсенче çавăн пек 4 линии хывнă.

### Заказчик - НГДУ

Кӳршĕ Çарăмсан районĕнче нефть хӳтĕлекен сооружение те "Мелиорация" ПМК АООТ рабочийĕсен вăйĕпе тунă. Ăна нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени заказĕпе пурнăçланă пулнă. Кăçал нефтяниксем тата икĕ сооружени тума планлаççĕ.

### Каяшсем тăкмалли вырăн

Çакă районшăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ те кирлĕ пулни çинчен каламалли те çук ĕнтĕ. ПМК ăна "Коммунхоз" пĕрлешĕвĕн заказĕпе пĕлтĕрех тума тытăннă. Планланă ĕçсен чылай пайне пурнăçланă пулин те, ку объекта пĕтĕмпех кăçал кăна хута ярĕç-ха.

### Шыв çулне çавăрнă

Мелиораторсем хута ямалли объектсенчен пĕри - хресченсен хуçалăхĕсен "Заря" ассоциацийĕнче. Пĕр километрта эрозие хирĕçле ĕçе пурнăçласа кунта шыв çулне улăштарнă. Ĕçе "Татмелиорация" пĕрлештернĕ дирекци заказĕпе тăваççĕ.

### Лениногорск хулинче вылянă

Январĕн 8-11-мĕшĕсенче Тутарстан республикин иккĕмĕш Олимпиади енĕпе Кама леш енчи районсенчи вĕренекенсен хушшинче шахмат турнирĕ иртрĕ.

Çак турнира пирĕн район команди пĕрремĕш хут хутшăнчĕ. Команда Лиля Муратова (2-мĕш шкул), Алексей Самарин (4-мĕш шкул), Сергей Глухов (1-мĕш шкул) тата Радик Овчинников (1-мĕш шкул) кĕчĕç.

Турнир Олимп системипе иртрĕ. Кашни партие вылякана пĕрер сехет уйăрса пачĕç.

Ăмăртăва хутшăннисем питĕ ăста вылянине пăхмасăрах пирĕн команда та лайăх вылярĕ, малта пыракан вунă команда ушкăнне кĕчĕ. Ку турнир пире нумай пулăшрĕ. Çак паллă шахмат ăмăртăвне хутшăннă ачасен ашшĕ-амăшĕсене тав тăвас килет. Çитес вăхăтра район шкулĕсем хушшинче мала тухас тĕлĕшпе турнир иртĕ. Хатĕрленме тата унта хутшăнма вăхăт пур-ха.

**А.КОСТИН,**
**ДЮКФПăн тренер - преподавателĕ.**



***Мунир пурнăçра хăйĕн вырăнне тупнă. Вăл ялта питĕ кирлĕ професси представителĕ - механизатор. Икĕ çул ĕнтĕ тырçи вăхăтĕнче "ДОН-1500" комбайнпа тырăсем пуçтарать. Ĕç кăтартăвĕсем те унăн лайăх. Хальхи вăхăтра Мунир ял хуçалăх техникине юсать. Мăшăрĕпе Рушанияпа, доярка пулса вăй хураканскерпе, вĕсем икĕ ача ӳстереççĕ.***

***Ӳкерчĕкре: "Дуслык" хуçалăх механизаторĕ М.Галимов.***

***Н.Квашнина сăнӳкерчĕкĕ.***

## КУН хыççăн КУН

### Çĕнĕ пурнăç президенчĕ

Иртнĕ çул вĕçĕнче, декабрĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Республикин халăхĕ хăйĕн президентне суйларĕ. Федоровсăр пуçне çак вырăна çĕнсе илме Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ, вырăнти коммунистсен ертӳçи Валентин Шурчанов, ЛДПР партийĕн Чăваш Енри координаторĕ Олег Васильев, Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Владимир Ижедеров, Вячеслев Тимофеев кĕрешнĕ. Асăннă кандидатсене "тĕрев" парса пулăшма Мускавран çаварлă политиксем килсе çитнĕ.

Анчах халăх халь "пысăк" çынсен сăмахĕсене хăлхана чикмест. Çынсем хăйне ĕçре кăтартнă Николай Васильевич Федоровшăнах ытларах сасăланă. Вăл суйлава хутшăннисен 56,70 процентне тивĕçсе пĕрремĕш туртах çĕнтерсе иккĕмĕш срока президентра юлнă. Вице-президент пулма Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ Лев Кураков тивĕçнĕ.

### Туслăх кĕперĕ

Туслăх кĕперĕпе çыхăнчĕç икĕ республикăн икĕ халăхĕ - Тутарстанпа Чăваш Ен - çак кунсенче. Хырла çырми урлă хывнă çĕр метрлă кĕпере хута янă.

- Вырăнти халăха Тутарстан парне туса ĕмĕрсем хушши тарăхтарнă Хырла çырмин тертленĕвĕнчен хăтарчĕ, - тет Пăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Абдулхай Хайруллов. - Çак пĕчĕк юханшыв пĕр карттă çинче те çук, анчах та çуркунне вăл çухрăм ытла сарăлать. Пуринчен ытла Чăваш Республикин Патăрьел районĕн халăхĕшĕн ырлăх çитнĕ. Вĕсен Хусана, Тутарстанăн кӳршĕллĕ ялĕсене çитме çул 50 çухрăма кĕскелнĕ.

Çĕнĕ кĕпер ĕçе кĕрсенех Пăва - Патăрьел маршрутпа автобус çӳре пуçланă. Патăрьел - Хусан рейс та уçăлнă.

## Унăн пурнăçĕ - паттăрлăх



Кăçалхи февраль уйăхĕн 16-мĕшĕнче тутарсен паллă сăвăçĕ, художникĕ Гакиль Шарифуллович Сагиров 60 çул тултарать. Унăн шăпи çăмăл мар, вăл ачаранах вырăнпа выртать. Анчах та вăл парăнмасть, çак йывăр пурнăçра та хăйне тата хăйĕн çул-йĕрне тупнă. Гакиль кăранташа шăлĕсемпе хĕстерсе, тĕлĕнмелле сăвăсем çырать, питĕ хитре ӳкерет. Хальхи вăхăтра вăл ӳкернĕ çĕр-çĕр картина, пин-пин сăвă пур. Поэтăн виçĕ сăвă пуххи тухнă.

Унăн пурнăçĕ - чăнчăн паттăрлăх. Сăввисемпе ӳкерчĕкĕсем çак паттăрлăха малалла тăсаççĕ. Паттăрлăх малалла пырать. Пурнăç малалла пырать. Пултаруллă, хăйĕн паттăрлăхĕпе тĕлĕнтерекен поэт кĕçех 60 çул тултарать.

Гакиль Тутарстанти Нăрлат (Октябрь) районĕнчи Ахметово ялĕнче çуралнă. Унăн ачалăхĕ, çамрăклăхĕпе пĕтĕм пурнăçĕ вара Самар облаçĕн Кушкă районĕнчи Кивĕ Фейзулово ялĕнче иртнĕ. Халĕ те вăл хăйĕн 80 çултан иртнĕ амăшĕпе, Хабибджамал аппапа, çулла çак ялта канать. Хĕлле вара поэт Ульяновск облаçĕнчи Димитровград хулинче пурăнать. Çавăнтах унăн Наиль пиччĕшĕ те пурăнать.

Çапла вара, Гакиль Сагиров пирĕншĕн, Тутарстанта, Самар тата Ульяновск облаçĕсенче пурăнакансемшĕн, пĕрлехи ентеш.

Çак регионсенчи тутар общественноçĕн представителĕсем талантлă ентешĕн 60 çулхи юбилейне февралĕн 14-мĕшĕнче Димитровград хулинче паллă тăвасси çинчен калаçса татăлнă.

Хисеплĕ ентешсем! Çакна май эпир сире чĕнсе каласшăн. Тутар халăхĕн пултаруллă ывăлĕн юбилейне чаплă та чыслăн ирттерер, вăл çамрăк ăрушăн тĕслĕх пулса тăтăр. Кунта вара сирĕн пулăшăвăр кирлĕ. Пухăннă укçатенкĕ юбилей каçне ирттерме, парнесем илме кăна мар, унăн пултарулăхне çĕнĕ вăй хушма, пурнăçне кăшт та пулин лайăхлатма кайĕ.

Эпир сире, предприятисемпе организацисен ертӳçисене, бизнесменсене Гакиль Сагировăн фондне май пур таран укçа-тенкĕпе пулăшма ыйтатпăр.

Укçана расчет счечĕ çине куçармалла: Самара, ИНН 6311013290, Советское отделение СБ РФ N6994; тек.счет N40703810354430100062: Суб.корр. счет N30101810700000000612; БИК 043602612 Самарскому татарскому культурному центру "Туган тел" е çак адреспа почтăпа ямалла, е пырса памалла: 443020, г.Самара, ул.Галактионовская, 39. Редакция газеты "Бердэмлек". Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 33-24-10, 33-24-11, 22-24-39.

Укçана куçарнă чухне документ çине "Благотворительная помощь в фонд Гакиля Сагирова" тесе çырма ан манăр.

Малтанах тав тăватпăр.

Гакиль Сагировăн фондне пулăшу паракансене "Бердэемлек" хаçатра пичетлĕç тата "Ак бэхет" радиопа асăнĕç.

**Вазих МУХАМЕТШИН,**
**Самар облаçĕн "Туган тел" обществин президенчĕ;**
**Азат НАДИРОВ,**
**"Туган тел" обществин директорĕ;**
**Рафгат АГЛИУЛЛИН,**
**"Бердэмлек" хаçатăн тĕп редакторĕ, Гакиль Сагировăн юбилейне ирттерес тĕлĕшпе йĕркеленĕ комитет председателĕ.**

### Ĕçлеме чĕнетпĕр

**Нăрлат районĕнчи "Дуслык" хаçат редакципе инженер-программист пулса ĕçлеме аслă техника пĕлĕвĕ туяннă специалист (арçын) кирлĕ.**

# "Тĕп финанс документне çирĕплетме сĕнетĕп..."

Çĕнĕ 1998 çулта район çирĕплетмен бюджетпа пĕр эрне çеç пурăнчĕ. Тутарстан Республикин парламенчĕ Республикăн бюджетне декабрĕн 27-мĕшĕнче çеç йышăннă, çавăнпа та ун хыççăнхи икĕ-виçĕ кун хушшинче черетлĕ сесси пуçтарма май пулман. Бюджета çирĕплетес тĕлĕшпе планпа бюджет комиссийĕн председателĕн çумĕ Р.С.Чахмахчев пĕрремĕшĕ пулса сĕнӳ пачĕ.

## Кивçен илетĕн пулсан, тавăрса пама та пĕл

Пĕлтĕрхи бюджета пурнăçлани çинчен отчета райсовета Р.Г.Билалов çĕнĕ должноçра - район администрацийĕн пуçлăхĕн финанспа экономика ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен советникĕ пулса тăратрĕ. Бюджетăн 1997 çулхи база кăтартăвĕсене вăл ертсе пынипе йĕркеленĕ - унăн отчет тумалла та ĕнтĕ. Доклад кĕске пулчĕ, анчах та çав вăхăтрах тарăн содержаниллĕччĕ. Кăмăллах мар критика та пурччĕ, çав шутра хресченсен хуçалăхĕсен тата кооперативсен ертӳçисен тĕлĕшпе. Тĕрлĕ ыйтусене татса пама район бюджетĕнчен илнĕ кредита мĕнле майпа тавăрса парасси вĕсене сахал пăшăрхантарать пулас. Пĕрлехи сумма вара чылай пысăк - 23977 миллион тенкĕ, вĕсенчен 23003 миллион тенкине "чĕрĕ" укçапа уйăрса панă. Тĕслĕх вырăнне Р.Г.Билалов "Çуткӳл" ассоциацие илсе кăтартрĕ. Унта 1997 çулхи ноябрь уйăхĕнче ĕç укçи 72,0 миллион тенкĕ шутланнă, декабрь уйăхĕнче - 80 миллион тенкĕ, анчах продукци (сĕт кăна, аш - çук) дотацие шута илсе, ноябрь уйăхĕнче 17,8 тонна 20,5 миллион тенкĕлĕх сутнă, декабрь уйăхĕнче - 22,6 тонна, 26,3 миллион тенкĕлĕх. Залра лараксенчен чи тимсĕрри çеç çакăн тĕлĕшпе кирлĕ пĕтĕмлетӳ тумарĕ пулĕ...

Докладчик ку е тепĕр статьяпа мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ тăкаклани çинчен Совета тĕплĕн каласа пачĕ. Сăмах май каласан, эпир Хусана самолетпа çур хакпа кăна вĕçнипе бюджетран 131 миллион тенкĕ тăкакланнă. Ку пирĕн бюджет тесе мĕнле калаймăнха?

## Пуян пурăнас тесен, тата 5 процент хуш

"1998 çула палăртнă бюджет проекчĕн тĕп кăтартăвĕсем çинчен" доклада тума финанс пайĕн çĕнĕ заведующине Ф.Н.Губайдуллина хушнăччĕ. Çакăнтах Ф.С.Сибагатуллин ăна районти "финанссен министрĕ" терĕ, çакăн пек каласа йăнăшмарĕ пулмалла: кăçалхи бюджет çăмăл йĕркеленмĕ. Тĕп йывăрлăх вара налуксене пуçтарассине тивĕçтерессе пулĕ. Çакна депутатсем пурте ăнланчĕç. "Ертӳçĕсем пурте налуксене вăхăтра тӳлесе татса пырсан çеç" ăнăçлăх пулĕ тесе палăртрĕ докладчик. Малашнехи тупăш çапла пулĕ: тупăш тăрăх илекен налукăн танлаштарулла виçи 40,3 процент, уйрăм çынсенчен тупăш тăрăх илекен налук (30,6 процент), пурлăх налукĕ (10,7), ваккăн суту-илӳ тунă тăрăх илекен налук (8,4), çĕршĕн тӳлени (3,4), çĕр пуянлăхĕшĕн тӳлени (1,6), вăрман тупăшĕ (0,04) тата ытти тупăшсем (4,9 процент). Ф.Н.Губайдуллин бюджетăн тупăш илмелли çăлкуçĕсем çинчен тĕплĕн каласа панипе депутатсем ыйтусем парсах каймарĕç. Пурлăх налукĕсемпе çĕр пуянлăхĕшĕн тӳлессине "Татнефть" акционер обществинчен республика бюджетне централизацилесси çинчен депутатсене тепĕр хут аса илтерчĕç. Тĕп фондсен хакĕсене тата нефть кăларассин кăтартăвĕсене шута илсен, çакă кăçал район бюджетне вăтамран 35239 пин тенке (1998 çулхи хаксемпе) ӳстернĕ пулĕччĕ.

Депутатсем çĕнĕ налук çинчен илтсен, залра лару-тăру йывăрланни сисĕнчĕ. Çакна ăнлантармалла, 1998 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен Тутарстан Республикин Патшалăх Совечĕ республика территорине çĕнĕ налук - ваккăн сутнин налукне кĕртнĕ. Ставкăсем тунă ĕнтĕ, алкоголлĕ продукципе хаклă япаласенчен сутнă тавар хакĕн 5 процентне тытса юлĕç, ытти улшăнусемпе - 3 процент. Район Совечĕн председателĕ ăнлантарнă тăрăх, кунта апат-çимĕç продукцийĕн хăш-пĕр ушкăнĕ кĕмест. Вĕсен шучĕ - 19. Халлĕхе çăкăр, сĕт тата тăпăрчă илме эпир ытла хаклă тӳлемĕпĕр. Сутнин налукне Патшалăх Совечĕ шутласа кăларман, ăна Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думи йышăннипе кĕртнĕ, Тутарстанпа Раççейри уйрăмлăх вара вăхăтпа çеç палăрма пултарать. Районта, тĕслĕхрен, ваккăн сутнин налукĕ 6000 пин тенкĕ шутланать. Бюджета ăна, паллах, кĕртнĕ ĕнтĕ. Анчах çав налука пухмалла вĕт-ха. Апла пулсан, касса аппарачĕсене вырнаçтармалла, алкоголь продукцине тата ытти таварсене лицензисĕр сутассине çирĕп тĕрĕслемелле. Акă ăçта вăл виçесĕр налук хирĕ... Уйрăмах пасарсенче.

## Налук службин начальникĕпе районти тĕп больницăн тĕп врачне мĕн пăшăрхантарать-ха?

Сессире 1998 çулхи бюджетăн хăшпĕр статйисемпе, пурте тенĕ пекех, килĕшмерĕç пулин те, яланхи комиссин икĕ доклачĕ тата содоклачĕ хыççăн та пренисенче тухса калаçас текенсем пулмарĕç. Сăмахран, вĕрентӳ тĕлĕшпе тăкак 39975 пин тенкĕ шутланать, çавăнтан 35 миллиона яхăн тенкине учительсене ĕç укçи тӳлеççĕ. Апла пулсан оборудовани тата ытти хатĕрсем туянма, çуртсене юсама мĕн чухлĕ юлать-ха? Акă шкул директорĕсене пăшăрхантаракан тата тепĕр ыйту. Нăрлат районĕнчи налук инспекцийĕн начальникĕ Г.А.Миннугалиев кĕскен тата хăйсен ĕçне критиклесе калаçрĕ. Выводсем - тĕллевлĕ. "1997 çулхи бюджетăн тупăш пайне пурнăçламан. Апла пулсан, эпир кирлĕ пек хытă ыйтман. Çĕнĕ çулта налук пуçтарас тĕлĕшпе тимлĕрех пулмалла. Пени тата штрафсене списать тумĕç", - терĕ вăл. Ятарлă комисси январĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса парăма кĕнисемпе черетпе çирĕп калаçĕ. Налук инспекцийĕн хăйĕн вара уйрăм çынсен çулталăкри тупăшне палăртмалла пулать. Çĕнĕ декларацисен ĕлкисем питĕ пысăк, 13 (!) листăран тăраççĕ. 30 çын 1996 çулхи тупăшшăн та тӳлесе татманха.

Сессире А.Л.Клементьев депутат та сăмах илмесĕр пултараймарĕ. 1998 çулхи бюджет проектĕнчи сывлăх сыхлавĕн нушисемшĕн тухнă тăкаксен калăпăшне централизацилесси çинчен панă сĕнӳсем (каланă пулсан - тунă!), тӳрремĕнех районти тĕп больницăна тивеççĕ вĕт. Çакă, паллах, унăн администраци службине çĕнĕ те пысăк тивĕçсем пурнăçлама хистет. Кунта вырăнти самоуправленин Совечĕсен председателĕсен малашне участоксенчи больницăсен, ФАП тата ФП ĕçĕсен ыйтăвĕсенчен пăрăнмалла мар - пĕрлехи ĕç вĕт. Каярах А.Л.Клементьев сывлăх сыхлавĕн ыйтăвĕсене райсоветăн сессийĕнче пăхса тухма сĕнчĕ.

Сессире трибуна çине çĕкленекен депутат урăх пулмарĕ. Ĕлĕкрех ертӳçĕсем клуб, çурт-йĕр тума тата шкула юсама укçа-тенкĕ уйăрса пама ыйтнине пурте пĕр пек йышăнассине, каярах ăна ĕçлĕ лару-тăрура пăхса тухассине тахçанах пăрахăçланă ĕнтĕ. Бюджета вара йышăнмаллах. Финансистсем ăна пĕр кунра кăна туман вĕт. Çавăнпа та унта чăнни нумай. Ун пирки тавлашаймăн.

## Атьăр-ха, укçана шутлама вĕренер

Депутатсен бюджета йĕркелес тĕлĕшпе ыйтусем пулнине пăхмасăр, халăх депутачĕсен Нăрлат район Совечĕн председателĕ Ф.С.Сибагатуллин тухса калаçса пĕтĕмпех ăнлантарса пачĕ. Бюджет кăткăс йĕркеленĕ - ку пĕрре. Анчах та рынок экономикин условийĕсенче укçана шутлама лайăх вĕренмелле, тенкĕрен тытăнса пуса çити - ку иккĕ. Тăкаксен калăпăшне централизацилени япаллăха ӳстерет тата халь вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, культура управлени начальникĕсен (пайсен мар, çук!) прависем ӳсеççĕ - вĕсем вырăнсене тухса çӳремелле, тимлĕрех ĕçлемелле. Ф.С.Сибагатуллин, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх системинче те структура улшăнăвĕсем пуласси çинчен пĕлтерчĕ. Вĕсене вара çитес çывăх вăхăтрах кĕтмелле. Хулара ăшăшăн тухакан тăкаксем питĕ пысăк - вĕсене пĕтермелле. Явап тытаканран ыйтмалла. Вăл çаплах хулари микрорайонсенчи çуртсенчен тăкакан каяшсене, çӳп-çапа илсе тухассине кирлĕ пек йĕркелемен, контейнерсем темиçешер кун тулли ларнине палăртрĕ. Администраци пуçлăхĕн архитектура службине тата хăшпĕр коммерци структурисене те ыйтусем пур. Сугу-илӳпе посредникĕçне пурнăçлас текенсем нумай, анчах та вĕсенчен налук кĕмест. Çавăнпа та çак структурăсен лицензийĕсене туртса илĕç, эрех-сăра вара налук туллин тӳлекенсене кăна сутма ирĕк парĕç.

Ф.С.Сибагатуллин иртнĕ çулăн итогĕсене сесси хыççăнхи канашлура пĕтĕмлетрĕ. Унтах вăл 1998 çулхи задачăсене палăртрĕ, тĕпрен илсен, АПК отраслисенчисене. Кунта çаплах райсовет депутачĕсем хутшăнчĕç.

**Т.НАЗАРОВА.**

***P.S. Январĕн 8-мĕшĕнче ТР президенчĕ М.Ш.Шаймиев "Пасарсенче суту-илӳ тунинчен налук илессине йĕркелес тĕлĕшпе йышăнмалли мерăсем çинчен" Указа алă пуснă. Ваккăн суту-илӳ тунинчен налук илессине йĕркелес тĕлĕшпе право акчĕсене йышăннипе налуксен илессине чарĕç.***

## Пирĕн футболистсем Димитровградра



Нумаях пулмасть пирĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулне çӳрекенсем Димитровградри "Лада" спорт шкулĕнче футбол вăййипе иртнĕ юлташлă тĕлпулусене хутшăнчĕç. 1986-1985 çулсенче çуралнă ачасен ăмăртăвĕсен результачĕсем салхулантарчĕç пулсан, 1984 çулта çуралнисен вара - савăнтарчĕç. Вĕсем 9:5 шутпа çĕнтерчĕç. Дима Киселев, Динар Миннугалив, Максим Яшмурзин, Ревальь Гилязев, Саша Ундалов, Ильшат Сафиуллин ăста выляни Димитровградра пурăнакансен кăмăлĕсене кайрĕ. Дима Одинцов, Олег Сидюков, Радик Киямов та хăйсем лайăх футболистсем пулнине кăтартрĕç.

## Редакци почтинчен

## Эпир циркра пултăмăр!

Хисеплĕ редакци!

Сирĕн пата Селенкĕшри вăтам шкулта вĕренекенсем çыраççĕ. Эпир кунта хамăр вăхăта интереслĕ ирттеретпĕр. Шкулта час-часах тĕрлĕ вăйăсемпе каçсем иртеççĕ: "Тĕлĕнтермĕшсен хирĕ", "Çăлтăрлă сехет". Эпир тата вĕрентекенсене, класс ертӳçисене пирĕн пурнăçа интереслĕрех тума тăрăшнăшăн тав тăватпăр. Нумаях пулмасть эпир пĕтĕм шкулпа районти культура çуртĕнче цирк куртăмăр. Колхоз правленине, ял Совет председательне, С.Андреев водителе тав тăватпăр.

**7-8 классенче вĕренекенсем.**

## Хăйĕн ĕçĕн ăстаçи



Ринат Гарифуллин нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленири 1-мĕш номерлĕ ЦДНГра чи опытлă оператор шутланать. Нефтьпе газ кăларакан цехра вăл çамрăк каччă пулнă чухнех ĕçлеме пуçланă. Кĕске вăхăтра профессин вăрттăнлăхĕсене алла илсе, вăл хăйĕн ĕçĕн ăстаçи пулса тăнă. Хальхи вăхăтра Ринат Маратовичăн ĕç стажĕ 17 çул шутланать. Çаплах вăл профессии ăсталăхĕн конкурсĕсене темиçе хутчен хутшăнса лайăх кăтартусем тунă.

Ÿкерчĕкре: Р.Гарифуллин оператор.

Н.Квашнина сăнÿкерчĕкĕ.

# Правилăсене пăсни хакла ларать

Питĕ шел, анчах та чугун çул урлă каçмалли вырăнсенче час-часах инкексем пулаççĕ. Переезд урлă каçнă чухне транспорт водителĕсем çулпа çÿрессин правилисене пăснипе инкек-синкек шучĕ чакмасть. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче Куйбышев чугун çулĕ çинче автотранспортпа куçакан состав пырса çапăнни 31 хутчен пулнă.

Куйбышев чугун çулĕн Ульяновск уйрăмĕнче 5 хут çапăннă, икĕ хутĕнче çынсем вилнĕ.

Октябрĕн 16-мĕшĕнче Куйбышев чугун çулĕ çинчи Моршан çулĕн 99-мĕш километрĕнче Агапов машинист тытса пыракан 6434 номерлĕ поезд сехетре 25 километр хăвăртлăхпа пырса, Заметченски автохуçалăхăн ПАЗ автобусĕпе пырса çапăннă. Автобусра 44 пассажир пулнă, 19-шĕ аманнă. Сăлтавĕ: водитель çулпа çÿрессин правилисене пăсни. Пассажирсем асăрхаттарнипе, переезд сигнализацийĕ кăтартнине пăхмасăр, вăл поезд переезд патне çитме 50 метр юлсан переезда кĕнĕ.

Июлĕн 19-мĕшĕнче Пĕкĕлме-Базаровка перегонĕн 1247-мĕш километрĕнчи переездра сехетре 50 километр хăвăртлăхпа пынă 3003 номерлĕ поезд çăмăл автомашинăпа çапăннă. Автомашина водителĕ вилнĕ.

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче Ватан-Минибаево перегонĕн 41-мĕш километрĕнчи переездра 5202 номерлĕ пассажир поезчĕ УАЗ-469 автомашинăпа çапăннă май машина водителĕпе пассажирĕ вилнĕ.

Переезд урлă каçнă чухне çулпа çÿрессин правилисене пăсакансене 23-мĕш дистанци ĕçченĕсем нумай тытса чарнă. Ульяновск облаçĕнче кăна çулталăк пуçламăшĕнчен тытăнса 80 тĕслĕх палăртнă.

Эпир мĕнпур водительсене чĕнсе калатпăр: чугун çул переезчĕсем урлă каçнĕ чухне тимлĕ тата асăрхануллă пулăр - поезда çул парăр.

Автохуçалăх ертÿçисене гражданcене илсе çÿрекен водительсен квалификацине тата ĕç пахалăхне тепĕр хут тĕрĕслеме ыйтатпăр. Чугун çул урлă каçмалли вырăнсенче йĕркене çирĕп пăхăнасси çинчен водительсене астутарса тăма ан ÿркенĕр.

Хĕлле - транспортпа ĕçлекенсемшĕн уйрăмах яваплă тапхăр. Çак вăхăтра транспортшăн тормоз çулĕ вăрăмланать, лайăх курăнмасть, çакă вара инкек-синкек патне илсе çитерет.

Р.КАМАЛЕТДИНОВ,
23-мĕш дистанци начальникĕ.

## Ыйту - хурав ? ?

# Эпир хваттершĕн тĕрĕс тÿлетпĕр-и?

*Çак ыйтăва эпир район администрацийĕ çумĕнчи потребительсен прависене хÿтĕлекен комитетăн председательне Р.Суфиянова патăмăр, пурăнмалли хваттершĕн тÿлемелли йĕрке çинчен каласа пама ыйтрăмăр.*

**Пирĕн çурт кивĕ, 50-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех тунă. Анчах хваттершĕн тÿленĕ чухне пире нимĕнле çăмăллăхсем те памаççĕ, çĕнĕ çуртсенче пурăнакансем пекех, уйăхсерен тÿлетпĕр. Тĕрĕс-и ку? Çак ĕçри йĕркепе паллаштараймăр-ши?**

**М.РАХИМОВА.
Нăрлат хули.**

Тутарстан Республикин министрсен Кабинечĕ 1994 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче 570-мĕш номерлĕ "Хваттершĕн тÿлемелли ставкăсем улăштарасси тата пурăнакан çуртсене пăхса тăрасси çинчен" йышăннă постановление тĕпе хурса, 1995 çулхи августăн 28-мĕшĕнче "Хваттершĕн тата ăна пăхса тăнин дифференциленĕ майпа тÿлесси çинчен" вăхăтлăх положени çирĕплетнĕ. Çак вăхăтлăх положени хваттершĕн тата вĕсене пăхса тăнăшăн, халăхсене коммуналлă тата урăх услугăсем панишĕн тÿлемелли йĕркене палăртнă.

Потребительсем хваттершĕн тата ăна пăхса тăнăшăн, йăлари хытă каяшсене илсе тухнăшăн, коммуналлă услугăсемшĕн (хутса ăшăтнăшăн, сивĕ тата вĕри шывшăн, электроэнергишĕн, газшăн) тÿлемелли укçана çитес уйăхăн 10-мĕшĕччен тÿлемелле. Тÿлеве вăхăтлă тÿлеймесен срокран иртнĕ кашни куншăн 0,1 процент пени тытса юлаççĕ. Потребитель ялан пурăнакан вырăнтан пĕр уйăха ытла тухса кайсан, коммуналлă услугăсемшĕн (хутса ăшăтни тата хваттер тÿлевĕсĕр пуçне), йăлари хытă каяшсене илсе тухнăшăн унăн заявленине тата çирĕплетекен документне тĕпе хурса тÿлев илмеççĕ.

Çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн чакарнă ставкăсемпе тÿлекен потребитель çак çăмăллăхсемпе вăхăтлă пурăнакан вырăнта та усă курать. Анчах та яланхи пурăнакан тата вăхăтлăха пурăнакан вырăнсенче çăмăллăхсемпе пĕр вăхăтрах усă курма юрамасть. Çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсен хакĕ улшăнсан кашни кварталта, çаплах çулталăк вĕçĕнче потребитель заявленине тĕпе хурса çĕнĕрен расчет тăваççĕ.

Хваттерсен тата вĕсене пăхса тăнин тÿлевне, коммуналлă тата ытти услугăсен тарифне Тутарстан Республикин министрĕсен „Кабинечĕ çирĕплетет.

Çурт-йĕрпе коммуналлă организацисем çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсен тарифĕсем улшăнни çинчен халăха вăхăтлă пĕлтермелле. Харпăрлăхăн пĕтĕм формисен патшалăх, коммуналлă, обществăлла пурăнакан фондсенче хваттерсемпе усă курнăшăн уйрăм категорири çынсене панă çăмăллăхсем пурăнакан хваттерсен социаллă нормисемпе килĕшÿллĕн: уйрăм хваттерсенче пĕр çынна пĕрлехи лаптăк 16,2 тăваткал метр, коммуналлă хваттерсенче - 12 тăваткал метр, сыхланса юлаççĕ тата хваттер, коммуналлă услугăсене (шыв, канализаци, хутса ăшăтни, газ, электроэнерги) çеç тиveççĕ.

### Хваттер тÿлевĕ

Хваттер тÿлевне патшалăхăн тата обществăн çурт-йĕр фондĕнче пурăнакансенчен илеççĕ, çакăнтах çурт-йĕр фондне çĕнетме усă куракан тÿлев кĕрет.

Хваттер тÿлевĕн ставкисем çак факторсенчен килеççĕ:

- хваттершĕн Тутарстан Республикин министрсен Кабинечĕ йышăннă хальхи база ставкипе тÿлеççĕ;
- хваттер вырнаçнă хутра;
- кивелнин шайĕ;
- хăтлăх шайĕ;
- çуртăн хăйевĕрлĕхĕ.

Хваттер тÿлевĕн ставкисене çак формулăпа шутлаççĕ;

Сн.= С баз.н. х П кв.м х к жил.п.,

Сн кунта - хваттерĕн пĕр тăваткал метрĕшĕн тÿлессин пĕр уйăх ставки;

С баз.н. - хваттерĕн пĕр тăваткал метрĕшĕн тÿлессин база ставки (Тутарстан республикин министрсен Кабинечĕ 1995 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче йышăннă тăрăх - 1000 тенкĕ).

П.кв.м - çурт-йĕрĕн пĕрлехи лаптăкĕ. Коммуналлă хваттерти пĕрлехи лаптăк шутне пурăнмалли пÿлĕм (сем) тата хушма лаптăксем (кухня, коридор, ванна, туалет т.ыт.те) кĕреççĕ.

К. жил.п. - хваттер тÿлевĕн коэффициенчĕ, ăна çапла шутлаççĕ:

К. жил.п. = Э х (1-КИ) х УК х ТС

Э кунта - хваттер вырнаçнă хутăн тÿрлетÿ коэффициенчĕ;

КИ - хваттер кивелнин коэффициенчĕ;

УК - хваттерĕн хăтлăх шайĕн тÿрлетÿ коэффициенчĕ;

Тс - çурта тунин хăйнеевĕрлĕхĕн тÿрлетÿ коэффициенчĕ.

Хваттершĕн тÿленин коэффициентне (К.жил.п) хваттер кивелсе пынă май кашнинчеçĕнĕрен шутлаççĕ.

Администраци пуçлăхĕ çурт-йĕр фондне кивĕ тесе йышăннă пулсан хваттершĕн тÿлемелле мар.

Хваттершĕн тÿленĕ чухне усă куракан тÿрлетÿ коэффициенчĕсене илсе кăтартатпăр:

Пĕрремĕш хутра Э 0,9 чухлĕ, иккĕмĕш хутран пуçласа (икĕ хут ытларах çуртсен) - 1,0, юлашки - 0,95.

Çуртăн хăйевĕрлĕхне кура ТС çакăн пек;

кирпĕчрен - 1.00; панеллĕ, блоклă тата монолитлă - 0,95; йывăçран тата кирпĕчпе йывăçран, щитлă - 0,90.

Хваттершĕн хăтлăх шайне кура УК (условнăй хăтлăх шайĕ) çакăн пек: уйрăм хваттер-1,0;коммуналлă хваттерти пÿлĕмсем - 0,8.

"Хваттер тата ăна пăхса тăнин тÿлевĕ çинчен" вăхăтлăх положени хваттершĕн пасар хакĕпе тÿлеме пуçличчен вăйра тăрать.

# Ырă кăмăллă кинемей

- Анне, сана илме килтĕмĕр.

Набира хăйĕн сăмахне вĕçлеймерĕ, кухнякан Райхана сасси илтĕнчĕ: - Вăл ниçта та каймасть, манăн отпуск вăхăтĕнче ан тив, ман патра пурăнтăр.

- Эпĕ ахаль те сана ывăнтартăм пулĕ, кăшт та пулин кан-ха...

- Анне, ан кай...

Кама-кама, Сара хăйĕн кинне итлемесĕр пултараймасть. Тепĕр тесен, ăна кин теме унăн чĕлхи те çаврăнмасть. Акă 20 çул ытла ĕнтĕ вĕсем пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ. Мухамметгалиевсен çемйине кин пулса кĕнĕ чухне Райхана вунçиччĕре пулнă. Малтан ялта пурăннă, кайран вара Нăрлата куçса килнĕ. Хунямăшĕпе кинĕ питĕ хăвăрт пĕр чĕлхе тупнă, кинемей ăна юратса пăрахнă, çамрăксем хирĕçкелесен вĕсене мирлештерме тăрăшнă. Кинемей вĕсене виçĕ ача пăхса ÿстерме пулăшнă, мăнукĕсем те ăна, ырă кăмăллăскере, питĕ юратаççĕ. Çавăнпа та, кинемей çулла тăван Кивĕ Амзя ялне кайма пуçтарăнсан вара вĕсем унран юлмаççĕ. Кунта, ялта тăванĕсем нумай, вĕсен шутĕнче кинемейĕн аслă хĕрĕ - Сазида, унăн виçĕ ача, иккĕмĕш хĕрĕ - Зария, çаплах йăмăкĕпе шăллĕ. Ял çыннисем, Сара аппа килнине илтсен, ăна курма васкаççĕ. Вĕсен çурчĕн алăкĕ кунĕпе тенĕ пекех хупăнмасть, сĕтел çинчи сăмавар вĕçĕмсĕр кашлать. Сара аппа хăть камппа та пĕр чĕлхе тупма пултарать.

Унăн, хăйĕн пурнăçĕнче тĕрлине курма тÿр килнĕскерĕн, çамрăксене мĕн каламалли пур. Вăл çак ялта пурăнакан Хаммадие питĕ çамрăкла, вунçиччĕрех качча тухнă, 13 ача çуратнă, вĕсенчен тăваттăшĕ пĕчĕккĕллех вилнĕ. Юратнă ывăлĕ Аминзян вара 24ра çĕре кĕнĕ, хăй вара утмăла çитиччченех мăшăрĕсĕр тăрса юлнă. Пурнăçне вăл ĕçре иртгернĕ, халь вара, сакăр ачи те пурнăçра хăйсен вырăнĕсене тупнăшăн кинемей питĕ савăнать, вĕсем те хăйĕн пекех ырă кăмăллă та хĕрхенÿллĕскерсем. Тавах турра, виççĕмĕш ăру представителĕсем те (вĕсем 20 çын), ырă кăмăллăскерсем. Мухамметгалиевсен тăваттăмĕш ăру представителĕсем те çулсерен хушăнса пыраççĕ. 84 çулти Сара аппан мăнукĕсен ачисем çирĕм пĕрĕн ĕнтĕ. Вĕсем пурте кинемейĕн сывлăхĕпе ялан кăсăкланаççĕ, ăна хăнана чĕнеççĕ. Кинемей вĕсене, хăйĕн çуралнă кунне паллă тума пуçтарăннăскерсене, хальхи пурнăçпа савăнма, мĕн пуррипе кăмăллă пулма, яланах чăн-чăн çын пулма сунчĕ.

Р.ГИНЯЕВА.

# *Лейсан - çурхи пĕрремĕш ăшă çумăр*

Сцена çинче тутар юрри илемлĕн янăрать. Хурлăхли те, савăнăçли те. Хулари иккĕмĕш номерлĕ шкулти XI класра вĕренекен юрланине итлеме уйрăмах кăмăллă: шкулта вырăсла кăна вĕренеççĕ вĕт. Лейсан Замалеева хулари шкулсем хушшинче пĕрремĕшĕ пулса сцена çинче тăван чĕлхепе юрлама хăюллăх çитерне, маларах шкулсенче нихăçан та ун пеккине илтме май пулман, халь вара ăна чăннипех çурхи пĕрремĕш çумăр пек йышăнаççĕ.



... Шăп кăна виçĕ çул каярах пирĕн районта тухса тăракан хаçат вулакансене Замалеевсен çемье ансамблĕпе паллаштарнăччĕ.

- Çемье ансамбльне йĕркелессин сăлтавĕ юрлама юратни пулнă пулсан, унăн тĕллевĕ - ачасене юратнă, кăмăл туртнă ĕç суйласа илессине активлатасси, пурнăçри йывăрлăхсене юрăпа пĕрле çĕнтерме вĕрентесси, - терĕ пире юрăça амăшĕ Разина Камилевна.

Разинапа унăн мăшăрĕн Вахитăн (вăл купăс калать) тĕллевлĕхĕнчен тата вĕсем кăмăла çĕклеме пултарнинчен пурте тĕлĕнеççĕ. Çакă Лейсанра та уççăн палăрать. Кăçал вăл пирĕн районти пултарулăх артисчĕсем хушшинче юрланипе кăна çырлахман, республикăри "Шăпчăк-97" конкурса та хутшăннă, кĕркунне вара Чистăйра зонăри "Тутарстан çăлтăрĕсем" конкурсра та пулнă. Республикăн никама пăхăнманлăх кунне уявланă чухне вăл Хусанти тĕп стадионта юрланă. Халь те вăл Хусана, республикăри конкурса кайма хатĕрленет.

- Сабит Миннехановпа Ильдар Шайхисламов аккомпаниаторсем кирлĕ вăхăтра яланах манпа çумлă. Репетицисене пĕрле иртеретпĕр, тавтапуç вĕсене, - тет вăл.

- Лейсан, малашне професиллĕ юрăçă пулас шухăш çук-и?

- Çук, халь юрăçăсем питĕ нумай, - терĕ вăл çирĕппĕн. - Эпĕ культурăра ĕçлес тетĕп. Кунта вара мана юрлама юратни пулăшĕ тесе шутлатăп.

Хăйĕн тĕллевĕ патне вăл халех çирĕп утăмпа утать. Хăй вăхăтĕнче музыка шкулĕнче вĕренеймен пулин те, халь ача-пăчасен музыка шкулĕн директорĕ Т.Бадыгин сĕннипе иккĕмĕш çул ĕнтĕ юрă класĕнче кăмăлпах вĕренет. Хăйĕн педагогĕсем çинчен унран лайăх сăмахсем кăна илтме пулать.

Лейсан кашни концертах хутшăнать тесен те юрать. Вăл юратнă юрăçăсен Салават Фатхутдиновпа Зайнап Фахрутдинован юррисене юрлать. Конкурссене хутшăнма ятарласа халăх юррисене вĕренет. Вĕсем те хăйĕн пекех илемлĕ, çутă та çепĕç.

Ăнăçлăхсем сунатпăр сана, Лейсан!

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

**Ӳкерчĕкре: Лейсан Замалеева, хулари 2-мĕш номерлĕ шкулăн юбилейĕнче.**

**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.**

## НПТС асăрхаттарать

Юлашки вăхăтра хулара пурăнакансем шыв пăрахĕсенчи шыв пахалăхĕ начарри пирки час-часах пĕлтерме пуçларĕç. Ăшă сечĕсен предприятийĕ çакă крансместительсемпе усă курнипе пулать тесе ăнлантарать. Çавăнпа ăшă сечĕсенчи тата шыв пăрахĕсенчи шыв пусăмĕ пĕр пек пулманнипе батарейăсенчи шыв ĕçмелли шыва лекет. Ăшăтакан системăна тĕрлĕ шĕвексем хушнине шута илсен, çакă сывлăха мĕнлерех сиен кӳнине пĕлме пулать. Ăшăтакан системăран шыв илекенсене администрациенчен айăплаççĕ. Çакăн пек çынсене тупса палăртма НПТС час-часах рейдсем йĕркелет. Вĕсене çак адрессемпе тупса палăртнă: Шашин урамĕ, 3-4, Советская урамĕ, 127-7, К.Маркс проспекчĕ, 3-2. Çавнашкал рейдсем тăтăшах иртĕç.

**Ф.ГИЗЗАТУЛЛИНА,**
**НПТС инспекторĕ.**

***Хăна юррисем***

## *Калаçа-калаçах каç турăм*

Алăкăра тапрăм, яр! уçăлчĕ,
Сунтăх пекех пӳртĕр çуталчĕ.
Тахçан килмен тăванăм халь килчĕ,
Тахçан юлнă кăмăлăм çаврăнчĕ.

Сирĕн урăрсенче кĕççе чăлха,
Мĕншĕн çӳретĕр-ха çĕр хута?
Çӳреметтĕмĕр эпир çĕр хута:
Тăвансем каймаççĕ ассенчен.

Тăхăр тиртен кĕрĕк эп çĕлерĕм,
Тăхăрвунă пĕрме пĕртертĕм.
Тăхăрвунă пĕрме саланас пулсан,
Тухать ман кĕрĕкĕм чыслăхран.
Тăвансем мана пăрахас пулсан,
Тухать çамрăк пуçăм çынлăхран.

Тăхăр тиртен кĕрĕк эп çĕлетрĕм,
Вунă тиртен çĕлетме шухăш пур.
Çамрăк ĕмĕрĕм вăрăм пулсан,
Пĕрле пурăнмашкăн шухăш пур.

Эпир юрламасан юр çумĕ,
Эпир калаçмасан каç пулмĕ.
Калаçа-калаçах каç турăм,
Ытараймасăрах çĕр выртрăм.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

## Лотерея...савăнăç кӳчĕ

Вырăнти самоуправленин ĕçченĕсене октябрь уйăхĕшĕн ĕç укçи панă чухне "Пăлхар фондăн" лотерея билечĕсене сĕннĕччĕ. Шкулта сантехник пулса вăй хуракан Завит Мурадымов пенсионерăн черечĕ те çитрĕ.

- Завит пичче, билет туянăр, тен, Меккăна (пуç çапма) кайма путевка выляса илĕр.

Лешĕ хирĕçлемерĕ.

Лотерея вылявĕ пулнă. Меккăна каймалли путевка Нăрлат районĕнче пурăнакан выляса илни çинчен телевизорпа тата радиопа пĕлтернĕ, районти çыхăну узелĕнче вара вăл пирĕн ялта пурăнни çинчен каларĕç. Завит пичче савăннипе çухалса кайрĕ, эпир вара телейлĕскере саламлама васкарăмăр.

Завит пичче, ури ыратнипе пурнăçĕ тăршшĕпех асапланаканскер, ĕссĕр пуçне урăх нимĕн те пĕлмен. Мăшăрĕпе Халида аппапа вĕсем пилĕк ача пăхса ӳстерне. Ырă кăмăллă та шӳтлеме юратаканскер, яланах çынсене пулăшма хатĕр. Унăн сасси те питĕ лайăх, ялти мулла çук чухне вăл мечĕт минаретĕнчен азан вулать.

Завит пичче çĕнĕ çурт турĕ, унта вĕсемпе пĕрле ывăлĕ Фаниль пурăнать. Вырăнти Совета налуксем те вĕсем ялта пĕрремĕшĕсем пулса тӳлеççĕ, çаплах сĕт те нумай сутса параççĕ.

Ырă хыпар яла питĕ хăвăрт сарăлчĕ, Завит пичче çавăн пек парнене тивĕç пулнăшăн ял çыннисем пурте савăнаççĕ.

**Н.САДЫКОВА,**
**самоуправленин Кульбаево-Мараса Совечĕн председателĕн çумĕ.**


# Пĕлтерӳсем

*Виççĕмĕш хутра вырнаçнă 3 пӳлĕмлĕ хваттере 2 тата 1 пӳлĕмлисемпе улăштаратпăр. 5-19-50 номерлĕ телефонпа 18 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутатпăр. Телефон: 5-18-86.*

* * *

*1985 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутатпăр, шурă тĕслĕ. 5-11-32 номерлĕ телефонпа 17 сехет хыççăн шăнкăравласа пĕлмелле.*

* * *

*Çуна çинчи гараж сутатпăр. Телефон: 2-16-28.*

* * *

*Çуна çинчи гараж сутатпăр. Комсомольская урамĕнчи 24-мĕш çуртра ыйтса пĕлме пулать.*

* * *

*1990 çулта туса кăларнă ВАЗ-2107 сутатпăр. Адрес: Маяковский урамĕ, 28.*

* * *

*1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-21213 "Тайга" сутатпăр, чие тĕслĕ. Адрес: Школьная урамĕ, 26-25, телефон: 2-18-02.*

* * *

*Лайăх шайри ВАЗ-2104 автомобиль сутатпăр. Телефон: 5-29-10.*

* * *

*Çуртсене, хваттерсене юсатпăр, платник ĕçĕсене пурнăçлатпăр. 5-16-25 номерлĕ телефонпа Назипа ыйтмалла.*

* * *

*Çĕнĕ ВАЗ-2106 автомобиль сутăнать. 2-28-10 номерлĕ телефонпа 19 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*ВАЗ-2121 (5 пусăмлă КПП), ГАЗ-53 сутатпăр, лайăх шайра. Тури Нăрлат ялĕ, телефон: 2-31-23.*

* * *

*Контрольпе касса машинисене техника енчен тивĕçтерекен Нăрлатри центр техника енчен тивĕçтерессипе 1998 çула договор туман çынсене контрольпе касса машинисене çĕнĕ хаксемпе ĕçлеме куçарттарас тĕлĕшпе иртерекен ĕçсене туманни çинчен аса илтерет. Договорсене кашни кунах 8 сехетрен пуçласа 12 сехетчен 53-мĕш СМУ кантурĕнче тума пулать.*

* * *

*Вĕренту центрĕ (Лениногорск хули) 1998 çулхи январĕн 19-мĕшĕнчен çак специальноçсемпе вĕрентме пуçлать:*

*1. Дозиметрист.*

*2. Хуран установкисемпе кăмакасен КИПиА слесарĕ.*

*3. Пăралу установкисене тивĕçтерекен электромонтер.*

*4. Нефтьпе унăн продукчĕсене хими анализĕ тăвакан лаборант.*

*5. Хамăр тата ют çĕршывсенче туса кăларнă пĕчĕк калăпăшлă хурансем.*

*6. Предприяти бухгалтерĕ.*

*7. Кадрсем тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор тата делопроизводитель.*

*8. Рамщик.*

*Пирĕн телефонсем: 2-34-45, 2-05-18. Адрес: Агадуллин урамĕ, 2.*

* * *

*Ульяновск хулинчи (çĕнĕ хула) икĕ пӳлĕмлĕ хваттере Нăрлатри пĕр пӳлĕмлипе тата Ульяновскри пĕр пӳлĕмлипе улăштаратпăр. Ытти вариантсем те пулма пултараççĕ (пысăк марри те юрать).*

*Сахăр завочĕн коммутаторĕ урлă 3-18 номерлĕ телефонпа шăнкăравламалла. Адрес: Ломоносов урамĕ, 21-10.*



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нăрлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нăрлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 856. Заказ N 310.